ТРУПИНА МАРХВИ

# ЕЂЁК

# РИКАТИРСЕМ

Ђăвашсен патшалăх истаттĕлстви

ШУПАШКАР 1931

Хакĕ 15 пус

31-299

ТРУПИНА МАРХВИ

# ПĔЂĔК ПРИКАТИРСЕМ

(КАЛАВ)

10—15 ҪУЛХИ АЂАСЕМ ВАԒԒИ

ЂĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИСТАТТĔЛСТВИ
ШУПАШКАР — 1931

# Пĕђĕк прикатирсем

(Калав)

I

Кăркуç çĕрле, 10 сехет тĕлĕнђе килне тавăрăнђĕ. Çывăрма выртнă амăшĕ Кăркуçа ахлатса, кăмăлсăр мăкăртатса тăрса уçрĕ. Краççынне кăштăртатса пырса çутрĕ. Хĕсĕкрех куçĕсене уçса йарса çутта пăхаймасăр питне-куçне пĕркелесе илђĕ те, Кăркуçа ўкĕтленĕ са̄ăпа:

— Шартлама сивĕре те таçта ђупса çўретĕн. Тумтирру пур—пĕр çўхе, шăнса пăсăлăн, ађам!

— Епĕр урамра çўремен вĕт. Таруççем патĕнђе пухăнса лартăмăр,—терĕ Кăркуç. Саплăклă пиншакне хывса пăтана çакса йађĕ.

— Çĕрулми, ав, сĕтел çинђех, çи!—терĕ те амăшĕ, хышанкаласа, вырăнĕ çине кĕрсе выртрĕ.

Кăркуç 12 çулхи лутрарах, хура пуçлă ађа. Мăйĕнђе пионер калстăкĕ. Шурă пир кĕпе, кăвак йĕм тăхăннă. Урине çĕтĕкрех çăмтăлапа çăпата сырнă.

Кăркуç аллине çуса сĕтел хушшине кĕрсе ларђĕ. Çĕтĕк кĕпепе—алшăллипе витсе хунă çăкăра касса илђĕ те, сивĕ çĕрулмипе, тăварпа пуçса çиме тытăнђĕ. Уй улми пек вĕтĕ çĕрулми, кăмакана хырса пĕçернĕскер, ђĕн пек, пĕрре те

тутлă мар. Шуратнă ҫух алла ҫыпăҫай. Кăркуҫ йалхуҫалăх выставккинҫе курнă ҫĕрулмине аса илҫĕ. Мĕн тĕрлĕ шултра, таса ҫĕрулмисем! Ҫиме те вĕсем тутлă, кĕрпеклĕ пулмалла! „Кĕл сапса лартнă ҫĕрулми“ тесе ҫырса ҫапнăҫҫĕ. Епĕр те колхосра килес ҫул ҫĕрулмине те, тырра та кĕл сапса туса пăхарха,—терĕ Кăркуҫ хăй ăшĕнҫе. Хăйĕн шухăшне унăн амăшне пĕлтерес килҫĕ.

— Анне...—терĕ вăл йăвашшăн.

— Мĕ-ĕн?—терĕ амăшĕ анаслакаласа.

— Епĕр пайан, колхос аҫисем, Таруҫсем патĕнҫе шут туса лартăмăр. Пĕр ĕҫ тума тытăнас тетпĕр.

— Мĕн ҫинҫен шут турăр апла? Халĕ епĕр колхоса кĕни те икĕ ерне кăна вĕт?

— Епĕр хамăрăн пухура тыр-пул тухăҫне хăпартас тĕлĕшпе ĕҫлессине сӳтсе йаврăмăр.

— Пĕҫĕккĕскерсем мĕн тырă-пулă тума пĕлетĕр есĕр? Пысăкрах ҫĕлĕ ҫăкăр касса тыттар сире, ҫавă ҫеҫ,—терĕ амăшĕ.

— Ҫимха, апла ан кала, анне! Епĕр хамăр мĕн тума пултарнине йышăнтăмăр. Пирĕн колхосра ҫиҫĕ аҫа вĕт. Ҫиҫĕ аҫа икĕ ушкăна уйăрăлтăмăр. Мишша, Хветле, Таруҫ, епĕ—пĕр ушкăн. Пирĕн прикатă кĕл пухай. Пуҫлăхĕ епĕ. Маруҫ, Ксенти, Вовиле—тепĕр ушкăн. Кусем пасар урамĕнҫи кислĕке пухаҫҫĕ. Ҫурҫҫен халĕ ҫылай тислĕк, кĕл пухма пулай. Халь пур те пекех улăм хутаҫҫĕ вĕт.

— Тислĕкĕ ĕнтĕ ҫĕре ҫемҫетет, кĕле пухни мĕне кирлĕши? Ку ĕмĕрте пулман йапала. Улăм кĕлне ăна авалтанпах ҫырмана тăкнă. Улăм кĕл вăл никама кирлĕ мар ура айĕнҫи йапала, есĕр

ӑна пухас тетĕр. Кĕле пухассине сире, аҫа-пăҫана, кам та пулин суйса кăтартнă пулĕ,—терĕ амĕш пăшăрханнă сасăпа.

— Никам та суйман, анне. Кĕл тăпрана аванлатнине пире шкулта учитлĕ калана, хам та кĕнеке ҫинче вулана. Выстăвккăра та кĕлпе лартнă ҫĕрулмираснах шултăра, йышлă, таса пулнине куртăмăр. Манăн шухăш ĕнтĕ мĕнле те пулин улăм кĕлне те, йывăҫ кĕлне те нумайтарах пухасси ҫинче ҫеҫ. Асту, хамăр кĕле пĕрре те ҫырмана ан тăк.

— Тăкманха ку таранччен. Пĕркун кĕле тăкас мар тесе кашни кунах йăнкăртаттăн та каткасем ҫине тултарас терĕн те... икĕ катка тулнă ĕнтĕ, урăх хывмалли савăт та ҫук.

— Ан тăк кĕле. Савăтне тупăпăр. Пирĕн прикатă Бавилесен прикатине ăмăртува чĕннĕ. Вавилесен пĕр пасар хыҫҫăн та тислĕк пухмасăр иртермелле мар. Пирĕн, тăватсăмăрăн, кашни аҫан колхоҫнĕксенне пилĕкшер килтен кĕл пухмалла.

— Йурĕ ĕнтĕ, аппаланăрах. Аҫапăҫан мĕн те пулин туса куна-ҫĕре иртерес пулаť,—терĕ амăшĕ анасласа.

Кăркуҫа амăшĕ кун пек калани кăмăлсăрлантарчĕ, Кăркуҫăн прикатă ĕҫĕсем ҫинчен амăшĕпе малалла калаҫасси те килмерĕ. Кăркуҫ ҫинĕ ҫимен сĕтел хушшинчен тухрĕ. Ҫĕрулми ҫыпăҫса пĕтнĕ пӳрни вĕҫĕсене алăпăлипе шăлкаларĕ. Урине салтма алăк патнелле кайса ларчĕ.

Амăшĕ ҫывăрса та кайнă. Сăмсипе шăхăртса сывлаť. Пӳрт кĕтесси хӳлт! турĕ — сивĕ шаккарĕ. Ах, ҫав сивĕ ҫанталăк! Мĕншĕн пулаťши ҫав

сивӗ ҫанталӑк?! Кӑркуҫа хӑш ҫух, кивелсе, ҫӳхелсе кайнӑ пиншакпа, ытла та пит сивӗҫке!

Кӑркуҫ ура салтса ларнӑ хушӑрах шухӑша кайса, хура куҫӗсене пӗр ҫӗре тӗллесе пӑхса тӑҫӗ. Ашшӗне аса илҫӗ. Тӗлӗкре пек кӑна астӑвать вӑл ашшӗне. Пӗрре Кӑркуҫа ашшӗ ҫурӑм ҫине лартнӑ та, ҫӗклесе пырать. Ашӑ, сап-сар хӗвел пӑхать! Ашшӗ лаша пулса карташӗнҫе ҫупанҫи пулать, сикелеме хӑтланать. Кӑркуҫ „пахха“ ҫинҫе ахӑлтатса кулса ларса пырать. Ашшӗве хӑлхинҫен йарса тытнӑ. Кӑркуҫ ун ҫух пӗҫӗккӗ, те виҫҫӗре, те тата пӗҫӗкрех...

Тата астӑвать: пӗрре ҫӑмӑр ҫунӑ кун ашшӗне тупӑка хурса килтен турттарса тухса кайрӗҫ. Ун ҫух амӑшӗ питӗ хытӑ йӗҫӗ...

Кӑркуҫа кӳршӗ арӑмӗ: аҫу ӑҫта? тесе ыйтсан— атте хулана кулаҫӑ илме кайнӑ, тесе калама вӗрентнӗҫҫӗ. Ӑс пӗлеҫҫен Кӑркуҫ ашшӗне хулана кайнӑ тесех пуранна-и тен, анҫах Кӑркуҫ халӗ ашшӗне йал пуйанӗсем персе вӗлернине пӗлет. Тӗттӗм кӗрхи ҫӗр, ашшӗ пухуран таварӑнна ҫух, йал куштанӗсем ӑна вӑрттӑн пӑшалпа пенӗ. Кӑркуҫ ашшӗ паллӑ, йалкор пулнӑ теҫҫӗ...

Ҫитмен, выҫлӑ-тутлӑ пурнӑҫа Кӑркуҫ пӗҫӗклех туйса ҫитнӗ, хӑш ҫух выҫӑхса ҫӳрени те темӗн ҫул пулнӑ. Тӑхӑр ҫулхи Кӑркус кӗтӳ те кӗтет, пахҫа хуралҫи те пулать.

Пуринҫен ытла Кӑркуҫа анисене сухаласа шуратса хӑварасси мӑйран каснӑ. Пӗр ҫур ҫитсен амӑшӗпе иккӗш йӗре-йӗре тенӗ пекех ҫынсенҫен лаша ыйтса ҫӳретҫӗҫ. Ах, канҫӑрҫҫӗҫке! Мӗн ҫухлӗ тархасланса пуҫҫапнӑ пуйана! Хӑш ҫух икӗ йатак анине те ҫурмалла акма тивеҫҫӗ

те—каллах выçăхса хĕл каçмалла! Кăçалтан ирттĕр, пĕттĕр асаплă пурăнăç! Кăçал колхос пулҫĕ. Кăркуç амăшĕ колхоса ҫăн малтан кĕҫĕ. Кăçалхи çур ĕнтĕ Кăркуçпа амăшĕн пуйансенҫен суха тума лаша кĕлесе çӳрес çук! МТС-ран трактăр килĕ те, колхос çĕрне сухаласа та пăрахĕ. Мĕн тĕрлĕ ырă çав колхос пулни!..

Урине салтма маннă Кăркуçăн шухăшĕсем колхос çине пырса тăрăнсан куçĕсем те, тутисем те кулса йаҫĕç. Вăл амăшĕ хыçне кĕрсе выртас тесе сиксе тăҫĕ, вырăн патнелле йарса пусрĕ, пăхаť—хăрах урине салтнă, хăрах урине салтман. Кăркуç урине салтса, тăли-çăпатине кăмака çине пăрахса, краççынне лап сӳнтерҫĕ те, вырăн çине хуллен кĕрсе выртрĕ.

II

Тепĕр кун Кăркуç шкула каймарĕ—канмалли кун пулҫĕ. Шкула кайас вăхăтра Кăркуç колхос пуçлăхĕ Пеťук пиҫҫĕш патне тухса ҫупрĕ.

Пеťук сарă сухаллă, ăшă куçлă вăрăм çын. Кăркуç пырса кĕнĕ ҫух пӳртĕнҫе пĕҫҫенех машшинăпа пиҫетленĕ хута пăхса лараťҫĕ.

— Мĕн хыпарпа вĕçсе килтĕн, шăнкăрҫ?— терĕ Пеťук, куçне хут çинҫен илсе.

— Çураки кампанине иртерме епĕр те, хамăр колхос аҫисем, хутшăнас тетпĕр. Пирĕн лосăнк—колхосри тырпул, тата ытти çимĕçсем тухăçне хăпартма пулăшасси,—терĕ Кăркуç шкулти пек уççăн. Хăй Пеťука хура куçĕсемпе шăтарас пек пăхаť. Сăмахсене калавă ҫух пĕҫĕк тутисем хăвăрт сикеççĕ.

Пеťук аҫа çине пăхса тăҫĕ те, ăшшăн кулса илҫĕ.

— Лосӑнкӗ калама та ҫук хитре-е! Ларха сак ҫине!

— Ну, вара?

— Вара... вара епӗр ҫак лосӑнка пурнӑҫа кӗртес тесе тислӗк, кӗл пухас тетпӗр. Епӗр икӗ прикатӑна уйӑрӑлтӑмӑр,—терӗ Кӑркуҫ сак ҫине ларса.

— Маттурсем! Аван шутланӑҫке есӗр,—терӗ Пеҫук Кӑркуҫпа йунашар пырса ларса. Пеҫукӑн куҫӗсем ҫуталса хитреленсе кайнӑ пек пулҫӗҫ. Кӑркуҫ ҫине йӑвашшӑн пӑхса ӑна сисӗнкӗсӗр савса илҫӗҫ.

— Ӗҫлӗр, ӗҫлӗр! Тырӑ-пулӑшӑн кӗрешни—сотсиалисӑмпӑн кӗрешни...

— Ӗҫлес тетпӗр. Пире кӗл пухса хумалли вырӑн кирлӗ пулаҫ, ҫавӑнпа килтӗм,—терӗ Кӑркуҫ.

Пеҫук кӑшт шухӑшласа ларҫӗ те, тӑрса кантӑк патне пыҫӗ.

— Кӗл пухса хумалли вырӑн пур пирӗн. Хитре вырӑн. Кӗл пухма йатнех темелле. Килха кунта!

Кантӑкран, ҫырма леш йенҫе, Ларик хуҫанӑн пулнӑ акӑш-манӑш вӑйлӑ ҫурт курӑнаҫ. Икӗ хутлӑ пӳрт, ампарсем, витесем... Пӗтӗмпех ҫул. Ӗлӗк Ларик хуҫа хӑмлапа, тырӑпа сут тунӑ. Ку ҫурта халӗ пӗтӗмпе колхоса панӑ, анҫах колхос халь кӑна пуҫланнӑ пирки ҫуртпа усӑ курман. Халӗ ку ҫуртра вулав ҫурҫӗ, йалканаш кӗнҫелерӗ. Пӳртӗнҫе йаҫлӗ тума, пурӑнмалли пӳлӗм тума та вырӑн ҫитет. Ҫурт-йӗрӗ тавра улмуҫҫи пахҫи... Пӗтӗмпе ывӑҫ тупанӗ ҫинҫи пекех курӑнҫӗ.

— Куртӑни, Ларик анкартинҫе, ҫырмара, карта хӗрринҫех пӗр пӗҫҫен ҫурт лараҫ?—терӗ Пеҫук ҫырманалла тӗллесе.

— Куратăп,—терĕ Кăркуç, пуçĕпе сулса.

— Çавăнта пухас кĕле. Унта çил те, йур та, çăмăр та кĕмест. Кĕл типĕ тăма пултарать.

— Йурать, çавăнта пухăпăр. Пире кĕле турттарса пыма та аван. Сăртран лар та, тўрех çырма тăрăх çунашкапа анкарти кĕтессине йарăнса çитетĕн,—терĕ Кăркуç çырманалла пăхса.

— Ну вăт, сире те аван. Анҫах асту: вĕри кăварлă кĕле кунта хума йурамасть. Пĕлес çук, таçта хĕрлĕ автан та сиксе тухса ташласа илĕ. Вĕри кĕлтен хытă сыхланăр.

— Ана астăвăпăр, астăвăпăр, Петьук пиҫҫе. Кăварлине кунта хума йураманнине пĕлетпĕр. Вăт тата пĕр сăмах пур...

— Мĕнха тата?

— Кашни прикатире тислĕк пухма та, кĕл пухма та пĕрер йешҫĕк кирлĕ пулать. Ларик хуçан сарайĕнҫе йешҫĕксем туллийех, пысăкки те, пĕҫĕкки те пур.

— Йурĕ, йурĕ, парăпăр. Кăшне кăмăллатăр, çавна илĕр.

— Пайантан епĕр кĕле пухма тытăнатпăр еппин,—терĕ Кăркуç. Тухса кайма алăк патне пыҫĕ.

— Ăçта васкатăн? Ларха!

— Кайасха. Пайан, шкула кайман кун, колхос ҫленĕсене прикатă кĕл пухма пулни çинҫен каласа çўрес... Сывă пул!

## III

Хĕллехи ăшă каçсенҫе пĕр каç пула пуçласан тăвайккинҫе вара аҫа-пăҫа кĕшĕлтетет. Кăшкăрашаççĕ, калаçаççĕ, кулаççĕ. Çырма леш

айккинҫе вӑрман пек курӑнса ларакан йӑмрасем хушшинҫе аҫа-пӑҫа сасси йан-йан!—тӑват. Аҫасем хӑшӗ пӑркутпа, хӑшӗ ҫунашкапа, хӑшӗ йӗлтӗрпе. Ҫырма пуҫӗнҫен, сӗвек ҫӗртен йарӑнма тытӑнаҫҫӗ те, ҫырма тӑршӗпе кӗрлеттерсе Ларик анкартийӗ патнех ҫитеҫҫӗ. Анҫах йаланах, кашни аҫах аван йарӑнса анаймаст. Ҫырмара, ҫул айккипе улӑм кӗл тӑкса кайнӑ. Илемсӗр хуп хура курӑнса выртат. Хӑш-хӑш тӗлте кӗл купи купипех. Ҫунашка йе пӑркут ухӑ пек виркӗнсе аннӑ ҫух ӑнсӑртран кӗл куписем ҫине пырса кӗрсен, сасартӑк тап ҫарӑнат, йӑванса кайат. Ларса пыран аҫи тӑрӑнса ӳкет, мӑкӑл-макӑл йӑваланса ывтӑнса кайат. Пиҫӗ-куҫӗ хуп-хура кӗл, пӑхма та хӑрушӑ, тумтирринҫен кӗл вӗҫет. Аҫа вара кӑмӑлсӑрланса, хӑш ҫух ыратнипе йӗрсе, ҫунашкине сӗтӗрсе кайалла хӑпарат, ӑшӗнҫе ҫав хура кӗле йатлаҫат. Кӗл пырса тӑкаканне курсан ҫем туса пӑрахӑҫҫӗ. Кам тӑкат-ши кунта кӗле?—Пурте, кам кӗл хакне пӗлмест, кам кӗле пухса хумаст, пурте кунта ҫырмана килсе йӑвантараҫҫӗ.

— Ҫурхи шывпа йухса кайат,—теҫҫӗ инкесем, аппасем, асаннесем! Шыв ӑсма ҫырмана аннӑ ҫух вара пурӑкпа кӗлне те ҫаклатса тухаҫҫӗ. Хӑш ҫух йарӑнма кайакан аҫине:

— Кӗле ҫунашка ҫине лартса тухса ҫырмана йӑвантарса хӑварӗха,—теҫҫӗ.

Аҫи вара кӗле ҫырмана илсе пырат. Пысӑккисем кӗле ӑҫта тӑкнӑ, вӑл та ҫавӑнта йӑвантарат. Йарӑнса аннӑ ҫух тен хӑйех ҫав кӗл ҫине кӗрсе ӳкет.

... Ӗнерхи сивӗ кӑшт ҫемҫелнӗ. Ҫырмара ҫил

те çук та, ăшшăнах туйăнаť. Тăвайкки хĕрринҫе пайан аҫа-пăҫа пасар пек вĕшĕлтетеççĕ. Çунашка сĕтĕрме пултаракан вĕтĕр-шакăр пайан пур те кунта пухăннă.

Аҫасем хĕрсе йарăннă вăхăтра тăвайккине Кăркуç, Мишша, Хветле, Таруç çитрĕç. Çунашкисем çине йешҫĕксем лартнă, йешҫĕкĕсене ҫăпта таткисемпе витнĕ. Аҫасем йешҫĕклĕ çунашкасене курсан ҫылайĕшĕ йарăнма пăрахсах Кăркуççем патне ҫупса пыҫĕç.

— Мĕн ку? Мĕн ку?—тесе ҫăптана сире-сире пăхаççĕ. Кĕл иккен. Улăм кĕлпе хутăш-йавăш йывăç кĕлĕ те пур. Тăвата йешҫĕкĕ те акă туп тулли.

— Кĕл тăкма-и? Ăçтан тупрăр кун ҫухлĕ кĕл?—теççĕ аҫасем.

— Кĕле çырмана тăкмастпăр,—тет Кăркуç.

— Ăçта илсе кайатăр, мĕн тума?—теççĕ аҫасем.

— Кĕл пухатпăр, курăрха ăçта илсе кайнине, терĕç прикатирсем.

Кăркуç малта. Вăл йешҫĕкне тытса çунашки çине тăҫĕ те, урине пĕриккĕ тапса илсе айалалла кĕрлеттерсе анса кайрĕ. Ун хыççăн Хветле, Таруç, Мишша тапранҫĕç. Вĕçе-вĕçĕн çăклă лавсем пек анса кайрĕç. Аҫасем пурте пекех пăхса йулҫĕç. Тăвата йешҫĕклĕ çунашка умлăн-хыçлăн анса кайни нумайĕшĕн кăмăлне килҫĕ. Ҫăн-ҫăн çăклă лавсем пек пыраççĕ. Мĕн пулаť-ха, ăçта кайаççĕха куйешҫĕклĕ çунашкасем тесе аҫасем пăхса тăраççĕ. Прикатирсем хăйсен çăкĕсемпе айалах анса çитрĕç. Ларик анкарти хапхине уçрĕç те, йешҫĕкĕсене кĕлетне сĕтĕркелесе, тĕккелесе илсе

кĕрсе кайрĕç. Унтан, нумай та тăмарĕç, пуш йеш-ҫĕксене çунашкасем çине лартса кайалла хăпара пуçларĕç.

Пĕр аҫа йĕлтĕрпе çĕмĕрттерсе анаҫ. Прикатирсем тĕлнелле çитеспе йĕлтĕрĕ ăнсăртран кĕл çинелле тăрăнҫĕ тăҫĕ, аҫа кĕрĕп çеç çĕре перĕнсе ўкрĕ.

— Терентей ўкрĕ! Терентей ўкрĕ!—тесе кăшкрашрĕç аҫасем.

Çав хушăрах хыттăн йĕрсе-çухăрса йани илтĕнҫĕ. Аран аран аҫа ура çине тăҫĕ Пиҫĕ-куçĕ хĕп хĕрлĕ йун.

Кăркуç Терентей йĕлтĕрне илсе хăй çунашки çине хуҫĕ те, Терентейе.

— Суранна халех çыхăпăр, таса мар аллупа ан тыт, аҫа Михаҫа пиҫҫесем патне, айакра мар,—терĕ. Терентейе çавăтса кайрĕ. Пĕриккĕ йарса пуссан Хветлепе Таруç çине çавăрăнса пăхрĕ те:

— Есĕр шкул аптекне ҫупăр, марҫăпа сулема ывĕ унта илсе пырăр,—терĕ.

Хветлепе Таруç çырма тăрăхах шкул патне тўртен ҫупрĕç, хытă вĕçрĕç. Пĕр пилĕк минут хушшинҫе кайэлла та çитсе тăҫĕç.

Сураплаппă Терентейе Кăркуç Михаҫа пиҫҫесем патнелле çавăтса кайрĕ. Терентей хытă ўкнипе пит хуллен утаҫ, унăн урисем те ыратаççĕ пулмалла. Хăй пĕрмай тути çинҫи йуна сурса пырса ĕçĕклет, йынăшаҫ.

Кăркуç Терентейе çавăтса пынă хушăра пĕр ҫĕнмесĕр шухăша кайса пыраҫ. Терентей ўксе аманни Кăркуç пуçне çĕнĕ шухăш кўртрĕ.

Пайанах, халех, тăвас...

Çапла шухăшласа пынă ҫух Таруçпа Хветле те кусене хуса çитрĕç.

— Есӗр Терентей суранне ҫыхӑр, епӗ тӑвайкине тухамха,—терӗ Кӑркуҫ хӗраҫасене.

Лешсем ҫыхма пулҫӗҫ. Михаҫа патне кӗрсе кайрӗҫ. Кӑркуҫ хӑйӗн ҫӗнӗ шухӑшӗпе тӑвайкинҫи аҫасен ушкӑнӗ патне вӗҫсе пынӑ пек пырса тӑҫӗ. Ҫунашки ҫинҫи йешҫӗкне ӳпӗнтерҫӗ те, хӑпарса тӑҫӗ. Ҫӑн-ҫӑн ораттӑрсем пек ҫӗлӗкне илҫӗ, хӑйуллӑн, ҫивӗҫҫӗн малалла пӑхрӗ.

— Йулташсем!—терӗ вӑл ӳсӗрсе илсе, уҫҫӑн.

Аҫасем кӗр пӗр ҫӗрелле пухӑнҫӗҫ, шӑпланҫӗҫ, Кӑркуҫа куҫран пӑхса илҫӗҫ.

Кӑркуҫ тепре ӳсӗрсе илҫӗ те, уҫӑ сассипе пуҫласа йаҫӗ:

— Аҫасем! Пире шкулта кӗл тырӑ-пулӑшӑн, ытти ҫимӗҫсемшӗн усӑлли ҫинҫен сахал каламан! Кашни шкулта вӗренекен аҫа ун ҫинҫен илтнӗ. Кӗл усӑлли ҫинҫен атте-аннесене калӑр тенӗҫҫӗ, кӗле пухса хума тӑрӑшӑр тенӗҫҫӗ! Анҫах ҫапах та кӗле—паха йапалана—епӗр ура айне тӑкатпӑр! Ҫитменнине хамӑрӑн савӑнса йарӑнмалли вырӑна пӑсатпӑр! Акӑ, куртӑр ӗнтӗ, Терентей ӳксе тутине, сӑмсине катса пӑрахрӗ!

— Епӗ те ӳкнӗ, ҫӗркуҫҫине шӑйӑрттарнӑ!—терӗ пӗр аҫа.

— Епӗ те алла сиктернӗ,—тесе кӑшкӑрҫӗ тепри.

— Епӗ кӗрӗке ҫурнӑ!

— Ҫарӑпӑрха!—терӗ тӑваттӑмӗш,—Кӑркуҫ калатӑр.

Йулташӗсене ҫавсапа тӗккелесе илҫӗ.

Кӑркуҫ ҫарӑнса тӑнӑ хыҫҫӑн кӑшт ӳсӗрсе илҫӗ те, тытӑнҫӗ калама.

— Куртӑмӑр, хамӑрах пӗлетпӗр кӗле кунта тӑкни

пире сийен тӑват! Малашне, йулташсем, кӗле кунта тӑкас мар! Кам кӗле килте пухмасӗ, кама амӑшӗсем кунта кӗл тӑкма йараҫҫӗ, кӗле кунта ан тӑкӑр! Куртӑри, епӗр кӗле ӑҫта кайса хутӑмӑр. Есӗр те кӗле ҫырмана йӑвантаратҫен ҫавӑнта пырса хурӑр! Епӗр колхос ваҫҫи кӗл пухар! Колхос епӗр пухнӑ кӗлпе тырпул, ҫимӗҫсем туса кӑтарттӑр! Халӗ пирӗн атте-аннесем кӗл тырпулшӑн, ҫимӗҫсемшӗн усӑллине ӗненмеҫҫӗ, кӗнекере каланине йышӑнмаҫҫӗ! Колхоса кӗл пухса парса епӗр аттесене кӗл уссине кӑтартар, ӑслӑлӑх хушнине йышӑнтарар! Кам епӗ каланипе килӗшсе пирӗнпе пӗрле ӗҫлес тет, ҫӗклӗр аларсене-е!

— Епӗ!

— Епӗ!

— Епӗ-ӗр!—тесе кӗрлесе йаҫӗ пӗтӗм вӗтӗршакӑр. Пӗҫӗк алӑсем нумай ҫӗкленҫӗҫ. Ҫинҫе сасӑсем йӑмрасем хушшинҫе йанӑрса карӗҫ.

Кӑркуҫ малалла тата ҫивӗҫрех, хӑйуллӑрах пӑхаӗ. Питҫӑмартисем улма пек хӗрлӗ, хура куҫӗсем йӑлтӑртатаҫҫӗ.

— Ан сӗрлӗрха! Кӑркуҫ каласа пӗтертӗр!—терӗ йулташӗсене ҫавсапа тӗкекен аҫа. Хаҫ те пӗр малалла кӗресшӗн тӑракан аҫана ҫавсапа хирсе хуҫӗ.

Аҫасем сӗрлеме ҫарӑнсан, Кӑркуҫ татах пуҫларӗ.

— Аҫасем! Малашне кунта пӗр пӗрҫӗ кӗл те ан пултӑр! Хаҫ мӗн пуррине те тасатар! Кам ҫывхарах, аӗӑр, кайса илӗр кӗреҫесем!—терӗ йулашкинҫен.

— Аӗӑр, кайса илер, илер!—терӗҫ сасӑсем. Вунӑ-вуникӗ аҫа ҫунашкисене пӑрахса килӗсенелле ҫупрӗҫ.

Кăркуç йештĕк çинҫен пысăк çын пек хуллен анҫĕ, çĕлĕкне тăхăнҫĕ. Вăл темĕн Хветлепе Таруç Михаҫа патĕнҫен тухса аҫасем патне пыҫĕç. Вĕсем хыççăн Терентей шурăпа çыхса пĕтернĕ питне тытса хуллен ухсахласа утса пырат̆. Аҫасем патне çитсе йĕлтĕрне илҫĕ те, килнелле салхуллăн утрĕ.

Çав вăхăтра виç-тăвата аҫа кĕреçесемпе персе те çитрĕç. Кăркуç патне пыҫĕç. Кăркуç пĕр аҫинҫен кĕреçине илҫĕ те, çул хĕрринҫен пĕр икĕ утăм айккинелле кĕрсе йура ҫакалама тытăнҫĕ. Кăркуçа кура ытти кĕреçеллĕ аҫасем те çапла тума тытăнҫĕç. Унҫҫен те пулмин кĕреçеллĕ аҫасем тата ҫупса килҫĕç.

— Есĕр улăм кĕлне хырса епĕр ҫакаланă çĕре йăвантарăр!—терĕ Кăркуç. Кунта та кĕле хăй хырса, çул айккинелле ывăтса кăтартрĕ. Вунăвуникĕ аҫа акă хĕрӳллĕн ĕçе тытăнҫĕç. Йурпа кĕл сирпĕнеççĕ кăна. Кĕреçесем пĕҫĕк аласенҫе вĕлт те вĕлт! сиккелеççĕ. Пĕҫĕк пуçсем, хĕрлĕ питсем ĕçленĕ çемĕн йалт та йалт курăнаççĕ. Пĕр çур сехет хушшинҫе кĕле çул айкинҫен хырса йур айне турĕç, хуранăн курăнакан тĕле таса йур сапрĕç. Тап-таса! Йап-йака! Ентĕ ним шикленмесĕр тăвайккинҫен кайăкла вĕçсе ан! Мĕн тĕрлĕ ырă!

Ĕç пĕтсен, ĕçленĕ аҫасенҫен пĕри:

— Ну, аҫасем! Кам кунта кĕл тăкат̆, çавна кунта йарăнтармастпăр! Килтисене те кунта кĕл тăкма йураманни çинҫен калăр!—терĕ.

— Тăкмастпăр!

— Тăкма йурамаст̆!

— Килтисене калас пулат̆ çав!—тенĕ сасăсем илтĕнҫĕç.

Каллех аӡа-пӑӡа çухрашса йарӑнма тытӑнӡӗ. Çунашкисем, пӑркутсем тӗрлеттерсе айалалла ыткӑнаççӗ. Пурте кӑмӑллӑ, аван. Кӑркуç та, ытти прикатирсем те йарӑнаççӗ.

*
* *

Çак каçран пуçласа тӑвайкки текех кӗлпе вараланмарӗ. Карта çине хут çырса çапнӑ:

„Кӗл çӗре çемçетет. Кӗлре калий текен тыр-пулла, ытти çимӗçсене усӑллӑ йапала пур. Кӗле урайне пӑрахса сайа ан йарӑр. Килте кӗле пухмастӑр пулсан, колхос кӗлетне кайса тӑкӑр. Колхос кӗлеӡӗ икӗ сехетрен пуçласа тӑватӑ сехете çитеӡӡен усӑ тӑрать, кӗле тешурнӑй прикатир илет“.

**Кӗл пухакан прикатӑ.**

Çак хута Кӑркуç тӑвайккинелле аннӑ çӗре, карта çине ирхине ирех пырса çапрӗ. Лаша шӑварма кайакан арçынсем, шыв кӳме тухнӑ хӗрарӑмсем ӡарӑнса тӑрсах хута пӑхаççӗ.

— Кам пӗлет... кӗлпе акса туса курман та, кӗле пухса аппаланас та килмест,—терӗ те пӗр ватӑрах арçын лашине çавӑтса аналалла утрӗ.

Виçӗ хӗрарӑм ӡарӑнса тӑӡӗç. Пӗри ликпункта çӳрекенскер, çамрӑкрах. Çавӑ калаçма тытӑнӡӗ.

— Епӗ кӗл çӗре çемçетессине илтнӗ те, пирӗн кӗле пухса хурас тесен агте пит йатлаçать. Турра манӑ та, кӗлсем, шӑмӑ çӑнӑхӗсем-мӗнсем сапса тырӑ тӑвасшӑн. Турӑ парсан кӗлсӗр-нимсӗрех тырӑ пулать, памасан—хут те тем ту—пулас çук. Турра хирӗçле йапаласем, колхоссем, камунсем тӑваççӗ те, çавӑнпа тырӑ пулмасть Кӗнеке тӑрӑх пӑхса тырӑ нумайах тӑваймӑн,—тет.

пирĕн аттĕ. Кĕлле ĕнтĕ ђăнахах та колхос кĕлетнех анса леçес пуљ, ахалех урама тăкса сайа тăватпăр,—терĕ йулашкинђен.

— Пирĕн Çинкка пайан кĕле урама тухса тăкма памарĕ вĕт, йĕрет, каçхине кĕле колхос кĕлетне кайса паратăп тет, пур ађа-пăђа та кĕле унта кайса параççĕ ĕнтĕ, тет. Хăй шкула тухса кайнă ђух кĕле пурăкпах çунашки çине çыхса лартса хăварђĕ.

— Пирĕн Ваңккапа Саңкка тата пайан ирхине ирех кĕле кăмакаран хăйсемех кăларса лартнă. Вĕсем те тем колхос кĕлетне кайатпăр,—тетђĕç пулас,—терĕ виççĕмĕш хĕрарăмĕ.

Пăхкаласа, калаçкаласа тăђĕç те, шыв ăсма анса кайрĕç.

Каç пулсан ађасем тăвайккине пухăна пуçларĕç. Ђылайĕшĕ çунашкисем çине хăшĕ пурăкпа, хăшĕ пĕђĕк йешђĕкпе, хăшĕ хăрăк-харăк витрепе кĕл лартса пынă. Кĕле пайан илекен тешурнăй Кăркуç. Вăл кашни кĕл илсе пыракан ађанне кĕлне вĕри мари, кăварли-мĕнли çуки тесе тытса пăхат, вара тин пушатат. Ађасем тăвайкки йарăнма пухăннă вăхăтра вунсакăр ађа кĕл килсе пушатрĕ. Кашни кунах кĕл кун пек пухăнсан ђылай кĕл пухăнат...

Кĕл пухма тытăнни пĕр-икĕ ерне иртрĕ. Кашни каçах ађасем кĕл илсе пыраççĕ. Колхоçнĕксенне те прикатирсем пуха-пуха анаççĕ. Кунран кун кĕлетре кĕл купи пысăкланса пырат.

Пĕрре Кăркуç кĕлетре тешурнăй пулнă. Тĕттĕм пулас умĕн пĕр ађа, пĕђĕкрехскер, кĕл илсе пыђĕ. Кĕлĕ çинђе пăђăр пађăр улăм пĕрђисем те курăнкалаççĕ.

— Атте çак кĕле лаççа тăкма парса йаҫĕ.

Кăрҫуç:

— Йурат, тăкас, терĕ те, кĕлне алăпа ҫавса пăхрĕ. Кĕл шалта алла пĕçерсех илҫĕ. Сиркелесе тăнă çĕртех улăм пĕрҫисене вут хыпса иле пуçларĕ. Кăркуç кĕле хăвăтрах илсе тухса йур ăшне ҫăмтарҫĕ, çийеле йур купаласа таптарĕ. Кăркуçăн алли-ури ҫĕтресе, хăй шуралса кайрĕ.

— Аçуна кала, ўлĕм кун пек кăварлă кĕл ан парса йатăр—терĕ Кăркуç кăмăлсăрланса кайнă пĕҫĕк аҫана. Аҫа хăйĕн кĕлне йышăнманшăн йĕрес пек пулса çунашки çине хăрăк витрине вырттарса килнелле утрĕ.

Ку аҫа ашшĕ колхоса хирĕç пит вирлĕ пырат. Колхос тăшманĕ айван аҫине кăварлă кĕл парса йарса хĕрлĕ автана ăсра тытса тăнă, анҫах сыхă тăраççĕ пĕҫĕк прикатирсем. Кăркуç колхоса хирĕç пыракан çын хытланни çинҫен комсомолсене калама шухăшларĕ.

*
* *

Хулленех хĕл иртсе кайрĕ. Çурхи кунсем—çут кунсем майĕпех çывхарҫĕç. Хĕлĕпех колхос аҫисен икĕ прикати те ĕçлерĕ. Амăртура тума пулнине икĕ прикати те 100%-пех пурнăçа кўртсе пыҫĕç. Кĕл пухасси ăнса пыни çинҫен калас та çук—калама çук аван.

Кашни пасар пулмассерен тислĕк пухакан прикатă çулăксемпе, кĕреçесемпе, шăпăрсемпе тухса ĕçе тытăнаҫҫĕ. Аҫасем мăн тислĕке хырса, щăлса пухатҫĕç те, пысăк йешҫĕксем çине тийесе колхос анкартине кайса йăвантаратҫĕç. Кăçал пасар урамĕ тап-таса, пăхсан куç савăнат.

Прикатирсем ĕçленĕ ҫух сынсем хăшĕ-пĕри прикатирсене ырлатҫĕç, хăшĕ-пĕри, аҫасен кăмăлне пăсас текенсем, тăрăхласа илетҫĕç. Аҫасем никам тăрăхланине те пăхмаççĕ. Вĕсем хăйсен умнелартнă сатаҫҫăна—тырпул тухăçĕшĕн тăрăшассинепĕлеççĕ, çаваншăн ĕçлеççĕ.

Хĕвел хĕртсе, ăшă çил вĕрсе çĕре типĕтсессĕнех МТС-ран Кăркуçсен колхоснетрактăр килҫĕ. Праçнĕк пек пулҫĕ çав кун. Трактăра хирĕç халăх йалĕпе пекех тухрĕ. Миттĕнк пулҫĕ. Машшин саслă çĕнĕ пурнăç пуçламĕшне ыра сунса хĕрӳллĕ сăмахсем уçă çурхи сывлăшра йанрарĕç. Колхоса ĕçлеме килнĕ акроном хăйĕн саламлă сăмахĕнҫе прикатирсен ĕçĕсем çинҫен те асăнҫĕç.

.... Кашни колхос пур майсемпе те ăслăлăх хушнă тăрăх тырă-пулă тухăçĕшĕн тăрăшни вăл— сотсиалисăм çулĕпе тунă утăм. Сывă пултăр наукkă хушнă тăрăх ĕçлесси! Сывă пултăр пĕрлешӳллĕ вăйлă ĕç! Сывă пулҫҫăр ĕç паттăрĕсем!

Миттĕнкран халăх праçнĕкрен саланнă пек саланҫĕ, колхоçнĕксем тытăнҫĕç ĕçе.

Çул хĕрринҫе, колхос хирĕ пуçланса кайнă çĕрте, икĕ пысăк купа курăнаť: пĕри—кĕл купи, тепри тислĕк. Çак икĕ купи те прикатирсем ĕçленипе пулнă. Нумайах пулмасť, колхоçнĕксем тислĕкне те, кĕлне те уйа турттарса хуҫĕç.

Акроном кĕле тытса пăхрĕ те:

— Кĕле пит аван усранă, первăй сорт! Пухасса нумай пухнă тата: кирлĕ çĕре кĕл çителĕклĕ сапма çитет! —терĕ.

Унтан акроном кăтартнипе колхоçнĕксем кĕле виçе-виçе хурса уйрăм купасем туса хуҫĕç. Ăçта мĕн ҫухлĕ кĕл, фосфорит, тислĕк хумаллине

акроном каласа кăтартрĕ. Колхоçнĕксем ĕçлеççĕ: турттараççĕ, тăкаççĕ, салатаççĕ тислĕке. Фосфорита, кĕле çĕклеççĕ, сапаççĕ. Нумай пусăллă уйра кашни тырпул валли, çимĕç валли хăшне тислĕк, хăшне тата кĕл нумайтарах сапрĕç. Пуринчен ытла кĕл çĕрулми пуссине нумайтарах лекрĕ, акроном çапла хушнă.

— Çĕре йусамалли йапаласем çителĕклĕ пулин те аŭăр, сăнамалăх кашни тырра, çимĕçе халиччен хи пек кĕлсĕр-нимсĕр акса пăхар, — терĕ акроном.

Колхоçнĕксем акроном каланине йышăнчĕç. Пĕрер татăк тĕрлĕрен тыră кĕл, фосфорит, тислĕк хумасăр акрĕç, тата кектарăн сакăр пайĕнчен пĕр пайне кĕлсĕрех çĕрулми лартса пăхма килĕшрĕç.

... Çанталăк уйар, ăшă. Хĕвел кăмăллă, çĕр питне ăшăтса пăхаŭ. Колхос ачисем — прикатирсем çара уран, кĕпе вĕççĕн ашшĕсене пулăшса, чупкаласа ĕçлесе çÿреççĕ. Трактăр мĕкĕрни вĕсене савăнтараŭ, вĕсен трактăр çине ларса пăхас килет. Кăркуç трактăр çине ларса курчĕ курчех: тыră акса пĕтернĕ кун трактăра вăхăтлăха колхос çуртне илсе кайрĕç.

Трактăрист Кăркуçа хăйпе йунашар хĕсĕнкелесе лартрĕ те, Кăркуç кăмăлне çĕклентерсе хурçă ут çинче ларса йала пырса кĕчĕ.

## IV

Хĕвел хĕртет. Сайра хутран çăмăрсем те пулкалаççĕ. Колхос хирĕсенче тырăсем машшинăпа акнăран пит тикĕс шăтрĕç. Çăра, хура-симĕс сăнлă калчасем пĕр пек тикĕс хăпараççĕ. Ниçта çум

курăкĕ çук. Шыв пек тап-таса, пĕр тикĕс курăнаĭ колхос калђи.

Ытти хресђенсен анисем çинђе калђасем колхосăнне çитеймеççĕ. Ула-ђăла, пĕр тикĕс шăтман. Хăшпĕр анасем, кайарах акнисем пăђăр-пађăр кăна шăткаланисем те пур.

Хăйсен тыррисемшĕн савăнаççĕ колхоçнĕксем; ытти хресђенсем кăмăлсăр пăхаççĕ хăйсен улађăла пуссине.

Вăхăг хулленех шăваĭ. Пусăри тырăсем çитĕнеççĕ. Колхос тыррисем маларах çитĕнђĕç—тырă вырма вăхăт çитрĕ.

К... йалĕнђи КÇШ ађисем Кăркуççен колхосне тырă выракан машшинă илсе килсе лартрĕç. Майлаштарђĕç, хăйсем кăшт вырса пăхрĕç те:—Ĕçлĕр ĕнтĕ, колхоçнĕксем!—терĕç.

МТС-ран тата авăн çапакан машшинă илсе килђĕç. Вырса купаланă çĕмелсене, суратсене пĕр çĕре турттарса машшинăпа çапсах пыраççĕ. Колхоçнĕксем пĕр виçĕ ерне хушшинђе тырра вырса, çапса пуçтарђĕç. Çинђех акрономпа КÇШ ађисем колхосправленине тырă тухăçне шута илме пулăшрĕç. Кăçалхи çул колхосăн пек тырă аван пулнине никам та астумасĭ. Ытти хресђенсен тыррипе танлаштарсан, колхос тырри кектартан 25 —30 пăта йахăн мала тухнă.

— Колхоса кĕнисем тырăран пуйан,—теççĕ колхоçнĕк маррисем.

— Манăн та кĕмеллеђĕ колхоса,—теççĕ хăшĕ пĕрисем.

Колхосăн тырă пит ăнса пулни çинђен йал хытă сăмах ваклаĭ. Кĕл çинђен, фосфорит çинђен çынсем калаçма тытăнђĕç. Курнă вĕсем, колхос

хирӗнҫе те кӗл, фосфорит сапман тырӑсем наҫартарах. Халиҫҫен кӗле ҫырмана тӑкакан ҫынсем кӗл ҫинҫен сӑмах тапрансан пӗрре те ҫӗнмеҫҫӗ, вӑраххӑн кӑна сывласа илеҫҫӗ.

Кӗр ҫывхарать. Колхоҫнӗксем хире ҫӗрулми кӑларма тухрӗҫ. Кӑркуҫ, тата ытти прикатирсем пусса малтан ҫитсе тӑнӑ. Кӗлсӗр лартнӑ ҫӗрулмине кӑларса пӑхрӗҫ. Ҫӗрулмийӗ вӗтӗ, ҫитменнине йыш·ӑр.

— Ай-йай, ай-уй, ытла вӗтӗҫке ҫӗрулмийӗ,— терӗҫ тинерех ҫитсе тӑнӑ хӗрарӑмсем.

— Ҫимӗрха, лешне кӗлпе лартнине кайса ҫакаласа пӑхар,—терӗҫ аҫасем. Кӗреҫисене тӑраткаласа кӗлпе лартнӑ ҫӗрулми ани ҫине ҫупрӗҫ. Вӗсен хыҫҫӑн хӗрарӑмсем те утрӗҫ. Тапратрӗҫ кӑларма. Шултра, таса ҫӗрулмисем вӑнк та вӑнк!— кӗреҫе айӗнҫен сике-сике тухаҫҫӗ.

— Вӑт, ку ҫӗрулми! Пӑхса савӑнмаллӑх пур!— теҫҫӗ хӗрарӑмсем шакӑлтатса.

Ҫанталӑкӗ те уйар тӑҫӗ те, ҫӗрулмине колхоҫнӗксем пур те кӗр ӗҫлесе тӑватӑ кун хушшинҫе кӑларса, турттарса пӗтерҫӗҫ. Колхосӑн ҫул путвалӗсем таса, шултра ҫӗрулмисемпе тулҫӗҫ.

Кайарах хӗрлӗ кӑшмана, выҫӑх ҫарӑкне, кишӗре кӑларса турттарса нӳхрепсене тултарҫӗҫ. Тырӑ-пулӑ, ҫӗрулми тата ытти тымар-ҫимӗҫсем ӑнса пулнӑшӑн колхоҫнӗксем пит кӑмӑллӑ, пит хӗпӗртеҫҫӗ.

Пӗтӗм ӗҫе пуҫтарнӑ ҫинҫен колхоҫнӗксен пуху пулҫӗ. Колхос правлени тырпул тухӑҫӗ ҫинҫен отҫот туса паҫӗ. Тата ӑратлӑ выҫӑхсем туйанасси ҫинҫен, копсойуса тырӑ, ҫӗрулми парасси ҫин-

ҫен сӳтсе йаврĕҫ. Тĕрлĕрен ыйтусем ҫинҫе акроном ҫапла каларĕ.

— Сирĕн тырă ытти хресҫенсенпе танлаштарсан кектартан 25—30 пăт ытларах тухнă. Вăл акă мĕнрен килнĕ: машшинăпа ĕҫленинҫен, фосфорит, кĕл, тислĕк тăкнинҫен. Епĕ тĕплĕн сăнаса, пĕтĕмпе шута илсе тухрăм. Ман шутпа сирĕн кектартан 12—15 пăт тырă ҫав тислĕке, кĕле пула ытларах пулҫĕ. Ҫĕрулми мĕн пур пуссипе кĕл сапса лартнăран 500 пăт ытларах тухнă. Астуса илĕрха, кама пула пухăнҫĕ сирĕн кĕлпе тислĕк? Пĕҫĕк пионерсене, пĕҫĕк ĕҫ паттăрĕсене пула мари? Ҫав кĕлпе тислĕке прикатирсем пухнине пула есĕр копсойуса ытларах тырă, ҫĕрулми пама пултаратăр. Ытларах тырă панипе сире ытларах тавар пама пултараҫҫĕ. Епĕ ҫак прикатирсене уйрăм парнелеме сĕнетĕп: кама мĕн пит кирлĕ, ҫавна ҫав йапалана илсе памалла.

Колхоҫнĕксем акроном каланине кăмăллăн, алă ҫупса йышăнҫĕҫ.

## V

Ыран Кăркуҫсен колхосĕнҫен стантса хĕрлĕ опос каймалла. Пеҫук пиҫҫĕш Кăркуҫа лав ҫинҫе хĕрлĕ йалав тытса пыма аларĕ. Ытти прикатирсем те пыраҫҫĕ.

Сивĕ кĕрхи ир. Хĕвел хĕрелсе тухнă вăхăталла йалтан хĕрлĕ опос тухса карĕ. Кăркуҫ малтанхи лав ҫинҫе Пеҫук пиҫҫĕшпе йунашар ларса пырса хĕрлĕ йалавне вĕлкĕштерет. Ҫăклă урапасем лаҫăртатса пыраҫҫĕ. 15 лав ҫĕрулмине, 5 лав тырăпа. Йалтан опос вăрăмăн тăсăлса

тухса кайрĕ. Малти лав çинçи хĕрлĕ йалав илемлĕн йавăнкаласа вĕçсе пырать.

Кăнтăрлапа хĕрлĕ опос стантса çитрĕ. Лавсем пысăк ампарсем патне пырса çаранçĕç. Колхоçнĕксем тырра пĕр ампарне, çĕрулмине тепĕр ампарне пушатрĕç. Пирĕн прикатирсем кунта та ĕççĕр мар: пысăккисене тырă, çĕрулми пушатма пулăшрĕç, лащасене пăхрĕç. Пушатса пĕтерсен пурте апатланма столовăйа кайрĕç. Апатлансан Петук аçасене:

— Ну, аçасем! Атăр райпо лапкине! Унта аçа-пăçа пальтти нумай. Кам хăш пальттона килĕштерет, кама хăшĕ йурать, тăхăнса виçсе пăхăр та илер!—терĕ.

Аçасем Петук пиççĕшне сăрănса илçĕç. Шакăлтатса калаçаççĕ, кулаççĕ, сиккелеççĕ. Кĕшĕлтетсе райпо лапкине кĕрсе тăçĕç. Петук приккашçĕке хут тыттарçĕ. Приккашçĕк хутне пăхрĕ те:

— Çиçĕ аçа-пăçа пальтти, пĕр мăшăр атă!—терĕ. Хутне ытти хутсен ушкăнне тирçĕ те, пальттосене. тата пĕр мăшăр атта илсе паçĕ.

Аçасем малтан пальттосене хăйусăртарах тыткаласа, тăхăнкаласа пăхрĕç.

— Епĕ çакна илетĕп,—терĕ Кăркуç, хура, хăйне лăп йуракан пальттона тăхăнса йарса. Çĕтĕк пиншакне миххе персе çикрĕ. Ыттисем Кăркуçа кура хăйуллăрах çаврăнкала пуçларĕç.

— Епĕ çакна, кăваккине,—терĕ Вавиле.

— Епĕ çакна, хурине, Кăркуçăн пеккине,—терĕ Мишша.

Хĕраçасем те хăйсене килĕшнине суйласа илçĕç. Пальттисене тыткаласа пăхса пĕр-пĕринпе пăшăлтатаççĕ, йăл-йăл кулса илеççĕ.

— Сана, Кӑркуç, пӗр мӑшӑр атӑ парас тетӗп,— терӗ Петӳк.

Кӑркуç хӗрелсе кайрӗ, нимӗн те ҫӗнмерӗ.

— Аҫасем, есӗр епӗ Кӑркуçа сиртен уйрӑм пӗр мӑшӑр атӑ панӑшӑн кӑмӑлсӑрланмастӑр пулӗ вӗт?

— Кӑмӑлсӑрланмастпӑр, çук!—терӗç аҫасем.

— Кӑркуç прикатӑсен ӗçне пуçарса йараканни пулнӑ вӗт!—терӗ Вавиле.

— Кӑркуç атта тивӗçлипе илет!—терӗç Кçенттипе Мишша.

— Ил, Кӑркуç атта! Йултташусем те ав, епӗ каланипе килӗшсе, атта сана парасшӑн, сана тивӗç,—терӗ Петӳк. Атта илсе Кӑркуçа паҫӗ. Кӑркуç хӗрелсе кайса атта илҫӗ.

— Тӑхӑнса пӑхха, тӑхӑнса пӑх, тен йурамасӳ!— терӗç аҫасем Кӑркуçа сырӑнса илсе.

Кӑркуç тӑхӑса пӑхрӗ. Атти лӑпах йураӳ...

— Ну, шӑнкӑрҫсем! Аӳӑр вӗçтерер килелле,— терӗ Петӳк.

Кӑркуç тӑли-çӑпатине те миххе перcе ҫикрӗ те, пурте пӗрле лапкаран тухрӗç. Пушӑ лавсем çине ларса килелле ҫуптарҫӗç.

... Кӑркуç амӑшӗ аҫине кӗтсе урама темиçе хутҫен туха-туха пӑхрӗ. Каçалапа çанталӑк сивӗтрӗ. Çурçӗр йенҫен сивӗ çил вӗрет. Кӑркуç стантса çӗтӗк пиншакпа кӑна кайнӑшӑн амӑшӗн ҫӗри вӑркаӳ. Шӑнса пӑсӑласран хӑраӳ. Краççын çутсан Кӑркуç йашт пырса кӗҫӗ. Калҭттопа, атӑпа, паллас та çук! Амӑшӗ ывӑлӗ çине тӗлӗнсе пӑхса илҫӗ.

— Ара, Кӑркуç, кам тумтиррине тӑхӑннӑ есӗ? Шӑнмарӑни?

— Пĕрре те шăнман, анне. Паљттийĕ те, аттийĕ те хамăннах. Кĕл пухса тырпул, çĕрулми тухăçне хăпартма пулăшнăшăн парнелерĕç. Астăватăни, епĕ кĕл пухасси çинђен каларăм та, есĕ мана çапла каларăн: кĕле ăна авалтанпах çырмана тăкнă. Кĕл вăл никама кирлĕ мар, ура айĕнђи йапала.

— Çапла каларăм çав,—терĕ амĕш ӳкĕннĕ сасăпа.

— Ура айĕнђине епĕр пухрăмăр, усçине куртăмăр—ура айĕнђине хамăр çине тăхăнтăмăр,—терĕ Кăркуç. Амăшĕ умĕнђе паљттине, аттине кăтартса çăмăллăн çавăрăнкаласа илђĕ.

Отпеч. в тип. № 1 Чувашгосиздата, г Чебоксары

Уп. Чувашлита № 1740 Заказ № 725 Тираж. 5.000 экз.

Цена 15 коп.

М. Трубина

# МАЛЕНЬКИЕ БРИГАДИРЫ

Чувашское Государствен. Издательство
Чебоксары, 1931